Ял хуçалăх предприятийĕсем – аталану çулĕпе

Хуçалăх хуçалла пăхнине юратать

Юлашки кунсенче пулнă çумăрлă çанталăк çĕр çыннине хăйĕн ĕçĕ çине критикăлла куçпа пăхмалли пирки тепĕр хут асилтерчĕ. Паян уяр çанталăкăн кашни саманчĕпе усă курмалла, хамăр тăвакан ĕç çине кашни çыннăн хуçалла пăхмалла. Паян çеç-и? Акă, хăвăрах шухăшласа пăхăр. Районта хăш-пĕр ял хуçалăх предприятийĕсенче вăл е ку ĕç мĕншĕн хытах чăхăмлать. Ĕлĕкхи пек шухăшланăран, çавăн майлах ĕçленĕрен.

– Э, эй, килти мар-иç, колхозăн,- теме хăнăхнă-çке эпир.

Кайран йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳксен: "Ах, çаплах тумаллаччĕ те", - тесе ĕнсене хыçма лекет. "Герой" хуçалăх правленийĕпе ĕçченĕсем вара иртнĕ çумăрлă шăмат кун кулянса-ахлатса лармарĕç. Пĕрле пуçтарăнса, хуçалăхăн малашлăхĕ пирки калаçрĕç, аталану çулне палăртрĕç.

– Малалла кун пек пурăнма юрамасть. Ял хуçалăх кооперативĕн пуласлăхĕшĕн унти кашни çын яваплăхлă пулса тăмалла,- çапла тĕв турĕç вĕсем.

КĔСКЕН АСĂННĂ ХУÇАЛĂХ ПИРКИ.

"Герой" районта ура çине çирĕп тăракан хуçалăхсенчен пĕри. Республикăри "Агроинноваци" унитарлă хысна предприяти палăртнă республикăри чи лайăх аталанакан 100 хуçалăх шутĕнче вăл. Вылăхчĕрлĕх отраслĕнче çеç мар, ӳсен-тăран продукцине туса илессинче те. "Герой" ял хуçалăх кооператив членĕсем курăмлă утăмсем тăваççĕ. Кусем пуш сăмах маррине çирĕплетме тĕслĕхсем илсе кăтартам. Вырма ĕçĕсем кунта кал-кал пынипе пĕрлех ир пулакан çĕр улмие кăларса пĕтерчĕç ĕнтĕ. Сурăх ĕрчетессипе ĕçлекен пĕртен пĕр хуçалăх "Герой" районта. Кунта вĕсен ăратлăхĕ пирки те шухăшлаççĕ. Кашни ĕнерен вăтамран кунта паян 15-16 килограмм сĕт сăваççĕ. Сыснасен талăкри ӳт хушаслăхĕ те пысăк т. ыт. те.

– Тата мĕн çитмест вĕсене? – тейĕ хăшĕ-пĕри.

Хăвăр мĕн шутлатăр? Пурăнакан, тăрăшса вăй хуракан çынна мĕн хумхантарать? Паллах, малашлăх. Акă, "Герой" ял хуçалăх кооператив учредителĕсем – кооператив членĕсем (вĕсемех унта ĕçлекенсем пулса тăраççĕ) шăпах хуçалăхăн малашнехи аталанăвĕ пирки калаçрĕç.

– Кооперативăн кашни членĕ унăн ĕçĕ-хĕлĕшĕн яваплăхне туймасан, пĕр административлă мерăсем йышăннипе çеç тухăçлă тыр-пул илме, выльăхчĕрлĕх продукцине ытларах туса илме çук, - татса каларĕ пĕрлехи пухура хуçалăх ертӳçи Р.Н. Тимофеев.

Мĕн тĕлĕнтерчĕ, мĕн савăнтарчĕ çак пухура? Хуçалăх специалисчĕсем, ял хуçалăх кооперативĕн ытти членĕсем Ростислав Николаевич шухăшĕпе килĕшни, вĕсем те хуçалăх пуласлăхĕшĕн çунса тăни.

Чăннипех те пĕр ертӳçĕ çеç хуçалăхшăн яваплă пулса тăнипе малалла кайма çукки паян кашниншĕн паллă. Çавăн пекех унпа танах кооперативăн кашни членĕн хуçалăха ертсе пырас ĕçе хутшăнмалли те. Унăн хăйне харпăрлăх хуçи пек туймалла. Ку вара чăннипех те çаплах. Ял хуçалăх кооперативĕнче унăн кашни членĕн пайĕ пур. Апла пулсассăн хăй хуçалăх учредителĕ пулнине туймашкăн унăн çав пай мĕнле калăпăшлă пулнă пирки пĕлни пĕлтерĕшлĕ. "Герой" хуçалăхра çав обязательнăй пай 2 пин тенкĕпе танлашать. Çак укçа-тенкĕ хуçалăх системинче пулнине кура çынсем ăна сисмеççĕ.

Кунта тепĕр япала та пур. Çав пай пуçне ял хуçалăх кооперативĕн кашни членне хуçалăхăн пурлăх пайĕ те тивĕçет. Вăл мĕн чухлĕ пуласси вара хуçалăх аталанăвĕпе, тупăшлăхĕпе тӳрременех çыхăннă.

Ку мĕн çинчен калать? Кооператив составĕнче хуçалăхшăн тăрăшакан, хăйĕн пурнăç малашлăхне хуçалăх пуласлăхĕпе пĕрле куракансем пулмалли пирки. Пĕрлехи пухура çакă яр уççăн курăнчĕ: "Геройра" çапла пулма хирĕç мар. Çавăнпа та ял хуçалăх кооперативĕн харпăрлăх пайĕ тата 2-шер пин тенкĕ хывма йышăнчĕç.

Çук, çук, ку укçа-тенкĕ пухмалли, халăх кĕсйине шăйăртмалли мел мар. Кооператив учредителĕсен-членĕсен яваплăхне татах та ӳстерет кăна. Çав суммăна вăйпа никам та тӳлеттермест. Енчен те кооператив членĕ унăн пуласлăхĕшĕн явапалăха туять, уншăн тăрăшма хирĕç мар пулсан, хуçалăха ертсе пырас ĕçе хутшăнас тет, вăл çав укçа-тенкĕне уйăх хушшинче хывать. Камшăн кооператив пуласлăхĕ интереслех мар, вăл унта ĕçлесе кăна пурăнас тесе çеç шутлать, вăл çав 2 пин тенке хывмасан та пултарать. Çапла майпа вăл кооперативăн ассоциациллĕ членĕ пулса юлать. Урăхла каласан, хуçалăх ĕçне тӳрременех хутшăнмасть.

Пухура çак шутлав механизмне хăйсен ĕçĕнчи хастар специалистсем килĕштерчĕç. Çапла майпа, хăв мĕншĕн ĕçленине туйса, хуçалăхри лару-тăру çине хуçалла пăхма пуçлатăн-çке. Унта йĕркесĕрлĕх-мĕн сиксе тухас пулсан, айккинче кăмăлсăрланса, усăсăр мăкăртатса та çӳреместĕн. Хуçалăх ертӳçинчен çакăншăн хытăрах ыйтма та пултарать. Пĕр сăмахпа каласан, "Геройра" ертӳçĕсемпе пĕрле пĕр тĕллевпе ĕçлеме пĕрре те хирĕç мар.

Сирĕн хуçалăхра тата лару-тăру епле? Эсир хăвăр хуçалăхăн пуласлăхĕшĕн яваплă пулса, унăн пуласлăхĕшĕн çунса тăма хатĕрри? Калăпăр, акă, эсĕ фермăра ĕне сăватăн. Сĕте пĕр килограмшăн 5-6 тенкĕпе сутсан, пĕр ĕне çулталăка сахалтан та 3 пин тенкĕ укçа туса парать. Паллах, эс хытă тăрăшса ĕçленĕрен. Хуçалăхсенче 200-300 пуç е ытларах та паян. Пахалăхлă сĕт сусан, çакă хуçалăха мĕн чухлĕ тупăш панине шутласа кăларма йывăрах та мар.

Кунта паллах, ĕлĕкхи сăмах çаврăнăшĕ килме пултарать чĕлхе çине: "Мана мĕн усси çакă. Ӳкçи хуçалăх кассине кĕрет мар-и."

Çу-ук, кунта вара эсĕ йăнăшатăн. Пĕрремĕшĕнчен пахалăхлă сĕт ытларах суса илнĕ май пысăкрах ĕç укçи илтĕн. Тепĕр енчен эсĕ ял хуçалăх кооператив учредителĕ пулнă май çулталăк вĕçĕнче хуçалăх тупăшне кура дивидента тивĕçетĕн. Калăпăр, 180 кг тырă е мĕн чухлĕ те пулин улăм т. ыт. те.

Лайăх-и ку? Лайăх пулмасăр. Йĕркеллĕ аталанакан кооперативра çапла пулмалла та вăл.

Акционерсен уçă е хупă обществине йĕркелеме пулать, кăмăл пулсан. Аталану çулĕ вĕçĕ-хĕррисĕр вĕт вăл. Ун чух вара акцисене сутма та, туянма та пулать.

Çав харпăрлăх туйăмĕ районти хуçалăхсен ĕçченĕсенче кашнинчех вырнаçсан мĕн пек лайăхчĕ. "Геройра", ав, ку юхăм пуçланчĕ ĕнтĕ. Кăмăл пулсан, укçу-тенкӳ пулсан, хăв та пулăшма пултаратăн кооперативна. Пĕр-пĕр суммăлăх инвестици хывма. Эс уншăн çука юлмастăн. Çапла майпа кунта санăн харпăрлăх пайĕ пысăкланать çеç.

Асăрхарăр-и, ял хуçалăх кооперативĕсен аталану çулĕ паян пысăк. Ĕçлемелле, хуçалăх пуласлăхĕшĕн тăрăшас кăмăл çеç кирлĕ. "Герой" хуçалăхри çак ырă улшăнусемпе пуху ĕçне хутшăннă район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов кăмăллă пулчĕ.

– Халăх пухура активлă пулчĕ. Хуçалăх аталанăвĕпе интереслении куç кĕретех, -терĕ вăл. – Кооператив аталанăвĕн тĕп шăнăрĕ – ĕçшĕн çунса тăракан çыннсенче.

Чăннипех те, ял хуçалăх кооперативĕсем ытти çĕрте аталаннă тĕслĕхсем нумай. "Геройра" пуçаруллă ĕçченсем вăй хураççĕ пулсан, вĕсем малалла та сулмаклăрах утăмсем тăвасса шанас килет. Çак ырă "чир" районти ытти ял хуçалăх кооператив членĕсене "ерессе" те.

"Геройра" иртнĕ пухура вара Альберт Николаевич район аталанăвĕпе пĕтĕмĕшле те паллаштарчĕ. Политика ыйтăвĕсем тавра та калаçу пулчĕ. Районта, çав шутра Ярапайкасси тăрăхĕнче те, сывлăха сыхлас ĕçре пысăк çитĕнӳсем пулнине палăртрĕç.

Л. ТУКТИНА.

Профилактика кунĕнчен

Çитменлĕхсем чылай тупса палăртрăмăр

Августăн 10-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем прокуратура ĕçченĕсемпе пĕрле Турай ял тăрăхĕн территорийĕнче профилактика кунĕ ирттерчĕç. Каласа хăвармалла, августăн 3-мĕшĕнчен тытăнса августăн 15-мĕшĕччен "Çул çитмен çамрăк" операцин виççĕмĕш тапхăрĕ "Çул çитмен çамрăк – тимлĕх" ятпа иртет. Çавна май профилактика кунне ирттерекенсем 4 ушкăна пайланса ĕçлерĕç. Вĕсем ку тăрăхри ăнăçсăр çемьесенче пулчĕç, апат-çимĕç продукчĕсемпе сутă тăвакан Çуткӳл, Уйкас Турай, Турай, Ăнаткасси магазинĕсене, "Валентина" магазина çитсе курчĕç.

Суту-илӳ предприятийĕсенче йĕркене пăснă тĕслĕхсем сахал мар. Чи малтанах усă курмалли срокĕ тухнă юрăхсăр продуктсем сутнине палăртмалла. Çавăн пирки кунта ĕçлекен сутуçăсем тĕлĕшпе административлă протоколсем çырма тиврĕ. Уйкас Турай ялĕнчи магазинра вара çул çитмен çамрăксене эрех-сăра, сигарет сутассине те саккуна пăсни вырăнне шутламаççĕ. Çав кун ятарласах тĕрĕслемелле 15 çулхи хĕр ачана сăрапа сигарет илтертĕмĕр. Сутуçă ним пулман пекех сутса ячĕ вĕсене.

Тепĕр ушкăн вара Çатракассинчи Димитриевсен, Албутов-Степановсен çемйисенче пулчĕ. Албутовсен хуçалăхне пырса кĕрсенех йĕркесĕрлĕх хуçаланни палăрать. Хĕлле пушар пулнă хыççăн кунта лару-тăру нимĕн чухлĕ те улшăнман. Çемье пуçĕ Алексей Албутов нимĕн çинчен те шутламасть. Кĕçех вĕсен иккĕмш ача çуралмалла. Анчах та ачана кĕтни сисĕнмест. Пур çĕрте те япаласем йăваланса выртаççĕ: кил хушшинче те, пӳртре те. 28 çулхи Алексей ниçта та ĕçлеме кайма шутламасть. Хăçан ĕçе вырнаçасси пирки ыйтсан вăл: "Тепĕр виçĕ уйăхран",– тесе хуравлать. Çак арçын хăйĕнпе пурăнакан, кĕçех ача кĕтекен 24 çулхи хĕрарăма кӳрентерме те именмест. Вăл ăна килтен хăваласа кăларса ярассипе хăратать. Мĕншĕн тесен çак хĕрарăма 3 çул ĕнтĕ килте прописканă тăратмаççĕ. Çавăнпа та ку хĕрарăм тĕлĕшпе те вăхăтра прописканă тăманшăн протокол çырма тиврĕ. Кунсăр пуçне ача çуратнă хыççăн та çемьере йĕрке пулмасан вĕсене ашшĕ-амăш прависенчен хăтарасси пирки ыйту лартасси пирки асăрхаттартăмăр.

Çав кунах Турай ял тăрăх территорийĕнчи судпа айăпланнă çынсем патĕнче те пултăмăр, вĕсемпе профилактикăлла калаçусем ирттертĕмĕр.

Турай ял тăрăхĕнчи рейд вăхăтĕнче административлă майпа йĕркене пăсни пирки пĕтĕмпе 10 протокол çырма тиврĕ.

Г. ГРИГОРЬЕВА,
районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделени пуçлăхĕ, милици майорĕ.

Эсир ыйтнипе

"Дача амнистийĕ" пирки

Сăмах кунта кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрекен, 2006 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче йышăннă 93-ФЗ № "Граждансен куçман пурлăхĕн уйрăм объекчĕсен правине ансатлатнă мелпе çирĕплетес тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" Федераллă саккун пирки пырать. Çавна май пурнăçа кĕрекен çĕнĕлĕхсем пирки эпир район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхне Олег Иванович ТИМОФЕЕВА пĕтĕмĕшле каласа пама ыйтрăмăр. Малашнехи калаçусенче ку ыйтусемпе тĕплĕнрех чарăнса тăрăпăр.

Саккунра "йăлари куçман пурлăх" пирки сăмах пырать. Ку вăл – дача çурчĕсем кăна мар, садпа пахча участокĕсем те, çавăн пекех çав участоксенчи ытти хуралтăсем те. Саккун ялти уйрăм çуртсемпе хула çывăхĕнчи коттеджсене, çавăн пекех вĕсен çумĕнчи хуралтăсене, сарайсемпе гараждсене, мунчасене т. ыт. те шута илмелли йĕркене ансатлатать.

Çĕр лаптăкĕпе тата куçман пурлăхпа усă курмалли правăна эсир вĕсемпе усă курнине ĕнентерекен кирек епле хутпа та (вырăнти администраци е предприяти профкомĕн йышăнăвĕ) çирĕплетме пултаратăр. Çĕрпе усă курма тахçанах тытăннă, анчах та çыннăн нимĕнле документ та упранса юлман пулсан та. Кун пек чухне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пичет пусса çирĕплетнĕ, хуçалăх кĕнекинчен çырса илнĕ хут тĕп документ пулса тăрать. Яллă вырăнсенче килти хушма хуçалăха тытса пыма уйăрса паракан çĕр лаптăкĕсене илнĕ чухне те çав хутах юрăхлă. Çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн вăл харпăрлăх правине шута илмелли шанчăклă никĕс шутланать.

Сăмах уйрăм çын лартакан пурăнмалли çурт-йĕр е ялти çуртпа килти хушма хуçалăх çинчен пырать пулсан, ку енĕпе йĕрке кăшт урăхларах. Кунта, малтанхи вăхăтри пекех, БТИ хутшăнăвĕ кирлĕ. Анчах кунта та ĕçе ансатлатнă. Унччен харпăрлăх хуçинчен (собственник) строительство ĕçĕсене тума ирĕк панине çирĕплетекен документ ыйтнă пулсан, халĕ вăл кирлĕ мар. БТИ пулăшнипе техника паспорчĕ илни те çителĕклĕ. 2010 çулччен строительство объектне ирĕк памасăрах ĕçе кĕртме юрать.

Енчен те çĕр чиккипе лаптăкĕ документра кăтартнинчен уйрăлса тăраççĕ пулсан, саккун çаванăшăн харпăрлăх хуçине нимĕн чухлĕ те айăпламасть. Тĕслĕхрен, çыннăн документ тăрăх ултă сотка çĕр шутланать. Анчах та вăл çичĕ соткăпа усă курать тейĕпĕр. Саккунпа килĕшӳллĕн унăн çакă мĕншĕн çапла пулса тухнине ăнлантарса та, çирĕплетсе те парас çук. Енчен те кӳршĕсемпе харкашутавлашу çук-тăк, саккун "ытлашши" метрсене унăн харпăрлăхĕ çине кĕртсе çырать.

Енчен те Çĕр кодексĕ пурăнмалли çурт-йĕр хуçине çурт йышăнакан участока пĕр хутчен приватизаци тума ирĕк панă пулсан, çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн эсир куçман пурлăхăн пĕтĕм объекчĕсене те (сире вĕсене яланлăхах панине е еткерлĕх правипе илнине пăхмасăрах) хăвăрăн харпăрлăха куçарма пултаратăр.

Çынлăх

Ырă кăмăл, йăваш куçсем...

Ырă кăмăл, хĕвеллĕ кулă, йăваш куçсем, пирĕншĕн ир те, каç та хыпса чунакан чĕре, ĕçре пиçĕхнĕ, тĕлĕнмелле ачаш алăсем... Анне. Вăл 5 çулхи ачашăн та, 75 çулти ватăшăн та чи хаклă, сăваплă та сумлă çын. Анне пире пурнăç парнелет. Пĕр çакăншăн кăна ăна пуринчен ытла хисеплемелле, юратмалла! Чун кӳтсе çитсен тӳрех ун ытамне васкатпăр. Çур сăмахранах ăнланать вăл, çемçе аллипе пуçран лăпкаса йывăр шухăш-кăмăла аякка сирет, хăйĕн чун ачашлăхĕпе пирĕн чĕресене ăшăтать. Ун умĕнче эпир ĕмĕр парăмлă. Амăшĕсем çине алă çĕкленĕ çынсен çылăхне вара, ман шутпа, нимĕнле усалпа та виçеймĕн. Чи çепĕç, таса та хаклă чуна асаплантарнине ниепле те ăнлантарма пулмасть... Ăнланма та çук.

Миша (ятне улăштарнă) хăйĕн амăшне çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ! Мĕн тери хăрушă! Ивановсем кӳршĕ ялта пурăнаççĕ. Ывăлĕ, ĕçке яраннăскер, ниçта та ĕçлемест (колхозсем салансан ĕçсĕррисен речĕсем самаях пуянланчĕç), амăшĕн пенси укçи юлашки пус таранах эрех çине каять.

Çав кунхине те харкашу эрехренех пуçланнă. Йӳçĕ шĕвек çамрăк пуçне минретсех янă пулас. Амăшне тискер чĕрчун та тапăнмасть-çке.

Аннерен хакли пирĕн никам та çук. Вăл сана хăйĕн чĕри айĕнче 9 уйăх йăтса çӳренĕ: утма, каласма вĕрентнĕ. Миша та амăшĕн сĕчĕпех ӳснĕ-çке! Вăл та хăйĕн вăхăтĕнче амăшĕнчен çавтăнса пĕрремĕш хăюсăр утăмсем тунă, савăнăçне те, хуйхине те унпа пайланă. Халĕ вара... Амăшне вĕлернĕ! Ватă карчăк чĕри тапма чарăнинченех ирсĕр ывăлне юратма пăрахман ĕнтĕ. Тен, вилес умĕн каçарма та ĕлкĕрнĕ...

Дмитрий Кедрин поэтăн чуна пырса тивекен пĕр сăвви асран тухмасть. Çав хайлавра çамрăк йĕкĕт кутăн савнин кăмăлне тивĕçтерессишĕн амăшне вĕлерет. Ун чĕрине йăпатать те савнă тусĕ патне васкать. Çул çинче вăл алăк урати çинче такăнса ӳкет. Амăш чĕри шăппăн çеç: "Ырттармарăн-и, ывăлăм", - тесе ыйтать...

Анне чĕрине палăк лартни те ытлашши мар. Вăл никам тӳсменнине те тӳсет. Эпир йăнăшсан та пĕр сăмахсăрах каçарать, хăй çумне лăпкаса пăчăртать... Ачи темĕнле тискер хăтлансан та – юратать.

Миша çын куçĕнчен пăхма пултарĕши малашне? Кашни çыншăн анне – чи сăваплă çын. Тăван амăшне вĕлерекене кам та пулин ал пама пултарĕши? Çын теме пулать-ши ăна?

И. СТЕПАНОВА.

Ĕçре палăрнисем

Тăрăшуллă сад ăсти

Василий Николаевич Николаев унччен Советскинчи профессипе техника училищинче вăй хунă. 40 çул сахал вăхăт мар. Пенсие тухсан вара вăл тăван яла таврăннă, хуçалăхра сад ăстинче ĕçлеме тытăннă. 5 çул хушшинче юхăнма тытăннă сад хуçалăхне ура çине тăратма пултарнă вăл. 6 çын ĕçлет кунта халĕ. Садра улмуççисем те ешереççĕ, утар та пур, хăмла çырли, хăяр, купăста ӳстереççĕ, парник та пур.

Василий Николаевич каласа панă тăрăх, пĕлтĕр кăна çур гектар çинче çитĕнтерекен хăмла çырлине сутса хуçалăха 30 пин тенкĕ тупăш кӳнĕ.

В.Н. Николаев хăйĕн ĕçне чуна парса пурнăçлать, çавăнпа та унăн ĕçри ӳсĕмĕсем те сумлă.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.